Йĕпреç районĕн хаçачĕ

# ÇĔНТЕРЎШĔН

Шăматкун
2007 юпа, 6

80 /8997/№

Хаçат 1932 çултанпа
тухса тăрать

Хакĕ ирĕклĕ
электронлă адрес:
ibresi@press.cap.ru

**Районти гражданла оборона тытăмĕн хисеплĕ ĕçченĕсемпе ветеранĕсем, пушара хирĕç кĕрешекен служба, аварипе çăлавăн штатра тăман службисен сотрудникĕсем тата ветеранĕсем!**

Сире, çутçанталăк пулăмĕсен чăрсăрлăхне, вут-кăвара е техногенлă катастрофа çулне пўлсе лартассине хăвăрăн кулленхи ĕç условийĕсем туса хунă, халăха тата тавралăха хўтĕлессипе çыхăнтарнă мĕнпур çынсене Раççей Федерацийĕн гражданла оборона кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп.

Сирĕн паттăрлăх, хăвăра шеллеменни, çивĕч лару-тăруран тухма май тупни тата кирек хăçан та пулăшу пама хатĕр пулни аркатуллă вăйсене чаракан хўтлĕх пулса тăраççĕ. Хăрушлăха çĕнтерсе, эсир тĕнчери чи хаклă пуянлăха – çын пурнăçне çăлса хăваратăр.

Паян çынсене хăрушлăхсăр пурăнма вĕрентессин культурине алла илме воспитани парасси уйрăмах пĕлтерĕшлĕ пулса тăчĕ. Эсир туса иртterекен профилактикăпа ăс-хакăл ĕçĕ çакна пурнăçа кĕртме пулăшать.

Кăçал çĕршыври гражданла оборона 75 çул тултарать. Мухтавлă традицисем тата пухнă ăсталăх çине таянса, эсир ўлĕмрен те хăвăр умра тăракан яваплă задачăсене ăнăçлă пурнăçласса шанатăп. Сире çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, ырлăхпа телей сунатăп.

***А. И. ПЕТРОВ,***
***район пуçлăхĕ.***

---

**Йĕпреç поселокĕнчи страховани пайĕн хисеплĕ ĕçченĕсем тата ветеранĕсем!**

Сире професси уявĕ – страховани компанине туса хунă кун ячĕпе чĕререн саламлатăп.

Росгосстрах страховани рынокĕнче районта та, республикăра та, çавăн пекех пĕтĕм çĕршывĕпех малти вырăнта тăрать. Юлашки çулсенче сирĕн страховани пайĕ тивĕçтерўн хальхи вăхăтри пысăк культурăллă учрежденийĕ пулса тăчĕ. Сирĕн ăнăçлă ĕçхĕлĕре пула пирĕн тăрăхра пурăнакан çĕршер çын хăйсене шанчăклă хўтлĕхре туять. Çак çитĕнўсем – хăйсен ĕçне парăннă, çынсен шăпишĕн, тăнăçлăхĕшĕн тата пурнăçĕшĕн яваплăха туйса тăракан ĕçченсен нумай çулхи ĕçĕн кăтартăвĕ.

Сирĕн коллективăн пысăк тўпине кăмăлтан палăртса уяв кунĕнче сире çирĕп сывлăх, пысăк профессионализм, тухăçлă ĕç, телейпе тăнăçлăх сунатăп.

***Йĕпреç районĕн пуçлăхĕ***
***А. ПЕТРОВ.***

---

**«Росгосстрах-Атăлçи» АУО Чăваш Енри филиалĕн Йĕпреç поселокĕнчи страховани пайĕн хисеплĕ ĕçченĕсем!**

Раççейри страховани компанийĕн професси уявĕ – Страхлакан кунĕ ячĕпе пиртен чи ăшă салама йышăнсамăр.

Эпир сирĕн пысăк калăпăшлă ĕçĕре, профессие парăннине, клиентсене пулăшма тăрăшнине хаклатпăр тата тав тăватпăр.

Сире ырă сывлăх, телей, тăнăçлăх, оптимистла туйăм, малашнехи ўсĕмсем тата шанчăклă клиентсем сунатпăр.

***«Йĕпреçри техника инвентаризацийĕн бюровĕ»***
***МУП коллективĕ.***

---

**«Çĕнтерўшĕн» хаçат редакцийĕ» РПУ Йĕпреç поселокĕнчи страховани пайĕн коллективне** уяв ячĕпе чун-чĕререн саламлать, сывлăхпа телей, тăнăçлăх тата хальхи экономика условийĕсенче вăй илсе аталанма ăнăçусем сунать.

---

### ХУТСА ĂШĂТМАЛЛИ ТАПХĂР

## КĔТМЕН КĂЛТĂКСЕМ СИКСЕ ТУХМĔÇ

**Кăçал çанталăк ырлăхĕпе чăннипех те килентĕмĕр. Умра – кĕрхи-хĕллехи тапхăр. Коммуналлă хваттерсенче пурăнакансене те, социаллă сферăри объектсенче ĕçлекенсене те хутса ăшăтмалли сезона мĕнле шайра хатĕрленни кăсăклантарать. Сивĕ кунсенче пăтăрмахсем сиксе тухас хăрушлăхсем пулмĕç-и? Çакăн çинчен тĕплĕнрех «Йĕпреç районĕнчи пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн пĕрлĕхĕ заказчиксен дирекцийĕ» МП директорĕ В. Г. ГРИГОРЬЕВ каласа парать:**

– Район пуçлăхĕн А. И. Петровăн хушăвĕпе килĕшўллĕн кăçалхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа шкул çулне çитменнисен тата сывлăх сыхлавĕн районти учрежденийĕсене хутса ăшăтма тытăннă ĕнтĕ. Тĕрĕссипе каласан, сезон пуçланчĕ темелле. Кĕç-вĕç, çанталăкăн талăкри температури вăтамран 8 градус ăшă таран анса ларсан, хваттерсенчи батарейсене те ăшă çитĕ.

Юлашки çулсенчи шартлама сивĕсем, чăнах та, хăшпĕр районсенче коммуналлă хуçалăх тата ытти яваплă службăсем умне йывăрлăхсем кăларса тăратнăччĕ. Пирĕн патра кунашкал лару-тăру сиксе тухман. 2007-2008 çулсенчи ăшăтмалли тапхăрта та «сюрпризсем» пулмасси пирки иккĕленў çук. Пирĕн муниципалитет предприятийĕ котельнăйсене тата ăшă сечĕсене çĕнĕ сезона хатĕрлессипе çу кунĕсенче пысăк калăпăшлă ĕç туса ирттерчĕ. Тĕслĕхсемпех çирĕплететĕп.

Йĕпреçри Мир урамĕнче вырнаçнă тĕп котельнăйра хурансем кивелсе çитнĕччĕ, вĕсем сивĕсем хуçаланнă тапхăрта юрăхсăра тухса йывăр лару-тăрăва кĕртсе ўкерме пултаратчĕç. Кăçал кунта икĕ çĕнĕ КСВ хуран вырнаçтартăмăр, пурĕ 800 пин тенкĕ тăкаклама тиврĕ. Кунсăр пуçне çак котельнăйра насус оборудованине (пурĕ 7 насус), тĕтĕм мăрийисен никĕсĕсене юсанă, шалти тата ăшă трасси çинчи арматурăна (пурĕ 60 штук) тĕрĕсленĕ, юрăхсăррисем вырăнне çĕннисем вырнаçтарнă, ăшă трассине гидравлика мелĕпе тĕрĕсленĕ тата ыт. те. Çак ĕçсенех кварталти котельнăйра та пурнăçланă. Унчченхи юсавпа строительство управленийĕн (РСУ) котельнăйне резерва лартнă май, Вăрманпромхоз тата Дмитриев урамĕсенчи нумай хваттерлĕ çуртсене ăшăтма 100 кВт хăватпа ĕçлекен икĕ хуран тата ăшă системине вырнаçтарнă, электроэнергипе тата шывпа тивĕçтерессипе çыхăннă ыйтăва татса панă – пурĕ 1 млн. тенкĕлĕх ĕç тунă. Сельхозтехника, Свердлов, Советская, Маресьев урамĕсенче вырнаçнă котельнăйсене те тĕплĕ хатĕрлесе çитернĕ. Кооператив урамĕнчи больница котельнăйĕнче кăна татса памалли проблемăсем ытларах пулчĕç. Кунта кĕске тапхăрта 3 насуса, 2 тĕтĕм мăрийине, больница территорийĕнчи ăшă трассине 240 метр тăршшĕ юсанă, икĕ хурана улăштарнă, 35 задвижкăна тĕпрен тĕрĕсленĕ т. ыт. те. Халĕ ку котельнăйра кĕтмен кăлтăксем сиксе тухмалла мар.

***К. ДМИТРИЕВ.***

---



# ЭПИР ЯЛАНАХ СЫХĂ

**ПАЛЛĂ КУН**

**1937-мĕш çулхи юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнче Чăваш Республикинче Патшалăхăн автомобиль инспекцине пуçласа йĕркелесе янă. Çав кун аваллăха тăрса юлнă пулин те, манăçми паллă кун пулса тăчĕ. Вăл вăхăхтра ПАИнче темиçе çын çеç ĕçленĕ. Вĕсем хăйсем тĕллĕн, ал айĕнче мĕн пуррипе, çул-йĕр паллисене ăсталанă, çул-йĕр правилисене ăнлантарас енĕпе нумай ĕç пурнăçланă. Никама илтмен çуран çынсене, транспорт водителĕсене тĕрĕс çўреме вĕрентнĕ, çулсем хĕресленнĕ вырăнсенче транспорт куçăмне йĕркелесе тăнă. Паян вара Чăваш Республикинчи ПАИ, хальхи пек каласан ÇÇХПИ, республикăри чăнчăн профессионалсенчен тăракан, чи çĕнĕ техника хатĕрĕсемпе ăста усă курма пĕлекенсен отрячĕ пулса тăчĕ.**

**Ĕнер пирĕн районти çулсем çинчи йĕркене çирĕплетес тĕллеве пурнăçлаканĕсем чаплă уява, 70 çулхи юбилейне паллă турĕç. Чăваш Республикинче Патшалăх автоинспекцийĕ йĕркеленнĕренпе çичĕ теçетке çул çитнине халалланă ятпа ÇÇХПИ районти уйрăмĕнче савăнăçлă пуху пулса иртнĕ. Çак мероприяти вĕçленнĕ хыççăн пирĕн корреспондент ÇÇХПИ районти уйрăмĕн пуçлăхне Валерий Иванович Андреев милици капитанне темиçе ыйту панă.**

***– Паллă куна епле кĕтсе илтĕр тата çав кун чуна савăнтаракан мĕнле пулăм асра юлчĕ?***

– Кунĕ яланхи пекех ĕçре иртрĕ. Ытти чухнехиллех хамăр тивĕçе пурнăçларăмăр. Чăнах та, хăшпĕр водительсем пире професси уявĕпе саламлани кăмăла ăшăтрĕ ĕнтĕ, çапах та уяв кунĕнче те сыхлăха чакарма юрамасть пирĕн. Çул çинчи лару-тăру вара питĕ пăшăрханыллă тăрать, канăçсăр вăл пирĕншĕн. Çулсем çинче транспорт йышĕ ўссе пынипе пĕрлех çул çинчи хăрушлăх шайĕ те çўлеллех кармашать. Çавăнпа пĕрлех граждансен тимсĕрлĕхĕ тĕлĕнтерет. Çынсем хăйсене те, юнашар пурăнакансене те хисеплеме пăрахнăн туйăнать. Чăннипех кунашкал йывăр самана 1937 çулсенче пулнă тĕр: çуран çўрекенсем каланине тăнламаççĕ, руль умне ларнă кашни çын унăн транспортне пурин те çул памалла тесе шутланă пек туйăнать. Правилăсем те, саккун та çук тейĕн вĕсемшĕн. «Инкек манран пăрăнса иртĕ», – çирĕп шанать кашни. Анчах та пурнăçра тўнтерле те пулса тухать. Йĕркене пăсаканĕсем, вĕсене хўтĕлекенĕсем юлашкинчен тўрлетме çук инкеке çакланаççĕ. Çул çинчи хăрушсăрлăхшăн кашнин тăрăшмалла. Хальлĕхе вара «курнине курман, илтнине илтмен пултăр» текен принципа пурăнакансем йышлă. Инкекĕ вара вĕсен килне те пырса кĕрет. Тĕслĕхрен, эсир ўсĕр водителе асăрхарăр. Ку ман ĕç мар тесе иртсе каятăр. Руль умĕнчи çын мухмăр чĕртсе тухнине куратăр. Ку та сирĕн ĕç мар. Машинăра лараканĕсем, водителĕ те пĕрлех – эрех-сăра ĕçеççĕ. Ку та пăшăрхантармасть. Çул хĕрринче, е çул урлă ўсĕр, тен чирлĕ çын выртать, ачасем выляççĕ, ку та сире кулянтармасть, пырса тивмест... Сахал-и кун пекки? Тепринче вара киле çитетĕр те сирĕн çемьере инкек мĕн! Эсир чĕмсĕр иртсе кайнипе майĕпен пуçтахланса кайнă çын машинăпа сирĕн ачăра (кунта тăванăра, кўршĕне тесе мĕн кирлине çырма пулать) çапса хăварнă иккен. Çав самантран чăнлăх шырама, пулăшу ыйтма милицине васкатăр. Анчах вĕсем мĕнпе сире пулăшайĕç, енчене те каллех кураканĕсем пулман, илтекенĕсем çук-тăк? Ахальтен им эпир тăтăшах халăхран пулăшу ыйтатпăр. Эсир пире пулăшни хăвăра хўтĕлениех вĕт!

***– Çул çинче, чăнах та, «кăра çанталăк» хуçаланать, уяр кунсем те çитмелле вĕт-ха...***

– Çапла. Эпир те çавна ĕненсе вăй хуратпăр. Уяв кунĕнче пирĕн коллектив умĕнче ветерансем сăмах илчĕç. Вĕсем паян та стройрах, пирĕн чи шанчăклă пулăшакансем пулса юлаççĕ. Юрий Павлович Филиппов, Николай Вениаминович Кузьмин, Петр Мефодьевич Никандров, Николай Никитич Данилов тата ыттисем те пирĕнпе яланах тачă çыхăнса пулăшу параççĕ. Çамрăксене сĕнў-канашпа хавхалантараççĕ. Общесвăлла инспекторсем те пирĕн ĕçе хăйсен тўпине хываççĕ. Шкулсенчи çамрăк инспекторсен юхăмне те ырăпа асăнса хăвармалла çак кун. Вĕсене куратăн та чăн-чăн маттур ăру çитĕннипе савăнатăн.

Юлашкинчен те пулин иртсе кайнă уяв ячĕпе пурне те саламлама ирĕк ыйтатăп. Хисеплĕ вулакансем, эсир пурте çул çинчи хăрушсăрлăхшăн тăрăшаканĕсем пулса тăратăр. Пирĕн професси кунĕ сирĕншĕн те уяв пултăр. Çул-йĕр правилисене кирек хăçан та пăхăнăр. Сирĕн пурнăç – сирĕн алăра.

**ЎКЕРЧĔКРЕ:** *ÇÇХПИ уйрăмĕн пуçлăхĕ В. И. Андреев ĕçе пуçăнас умĕн инспекторсене сĕнў-канаш парать.*

***А. ФИЛИППОВ***
***сăнўкерчĕкĕ.***

---

**ВНИМАНИЮ РУКОВОДИТЕЛЕЙ, ГЛАВНЫХ БУХГАЛТЕРОВ ПРЕДПРИЯТИЙ, ОРГАНИЗАЦИЙ, ХОЗЯЙСТВ, УЧРЕЖДЕНИЙ**

**РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «Çĕнтерўшĕн» («За победу») принимает заказы на изготовление всех видов бланочной, этикеточной и книжно-журнальной продукции.**

**В продаже имеются:**

**приходные, расходные кассовые ордера, путевые листы легковых и грузовых автомобилей, товарно-транспортные накладные, авансовые отчеты, накладные, доверенности, командировочные удостоверения, табеля использования рабочего времени, личные карточки, амбарные, главные кассовые книги, книги покупок и продаж, книги по заработной плате, книги учета расходов и доходов. Цены низкие.**

**Обращаться по адресу: п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6, 1 этаж, производственный участок, редакция газеты или по телефону: 2-11-97.**

# Владимир Путин «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн» списокне ертсе пырать

**Юпа уйăхĕн 1-2-мĕш кунĕсенче Мускавра «Пĕрлĕхлĕ Раççей» политика партийĕн Пĕтĕм Раççейри VIII съезчĕ иртнĕ. Ун ĕçне Раççей Президенчĕ Владимир Путин хутшăннă, вăл Раççей Патшалăх Думин депутачĕсен кандидачĕсен суйлав умĕнхи списокне ертсе пыма килĕшнĕ.**



Лару пынă вăхăтра съезд делегачĕсем хальхи политика çул-йĕрне сыхласа хăварас тĕллевпе Владимир Путинран «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн» суйлав списокне ертсе пыма пĕр хутчен çеç мар ыйтнă. «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парламентра ытларах пулни çине таянса, Президента 2008 çулта РФ Правительствине ертсе пыма та сĕннĕ.

Владимир Путин хуравласа, çапла каланă: «Правительствăна ертсе пырасси – чăннипех те пурнăçа кĕме тивĕçлĕ сĕнӳ. Анчах та хальлĕхе кун пирки шухăшлама иртерех, мĕншĕн тесен çавна валли сахалтан та икĕ услови кирлĕ: «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн» Патшалăх Думин раштавăн 2-мĕшĕнче иртекен суйлавĕнче çĕнтермелле, иккĕмĕшĕ вара – çĕршывăн Президенчĕ пулма йĕркеллĕ, ĕçлеме пултаракан, эффективлă, паянхи çынна суйламалла, унпа мăшăрлă ĕçлеме май килтермелле. Сирĕн партин пулас парламента пĕтĕм влаçа социаллă çирĕплĕхпе, ĕçлеме пултараслăхĕпе тивĕçтерсе тăракан инструмент, унăн аталану пуçаруçи, палăртнă пур плансене те пурнăçлас тĕлĕшпе влаçăн ĕç тăвакан органĕсен хӳтлĕхĕ пулса тăмалла. Çавăнпа та эпĕ «Пĕрлĕхлĕ Раççей» списокне ертсе пыма панă сĕнĕве хавассăн йышăнатăп».

«Пĕрлĕхлĕ Раççей» çинчен каланă май, Владимир Путин хăйĕн сăмахĕнче çакна ас тутарнă: «Çĕршыври политикăн чи пысăк партийĕ мĕнле тата хăçан йĕркеленнине эпир сирĕнпе лайăх астăватпăр ĕнтĕ. Ăна официаллă майпа 2001 çулхи раштавăн 1-мĕшĕнче туса хунă. Çакна пурте аван пĕлеççĕ, эпĕ парти тăвассине ырланă кăна мар, ăна тăвакан пуçаруçăсенчен пĕри пулнă, Мĕншĕн тесен, 90-мĕш çулсен варринчи «шок терапине», 1998 çулхи финанс пăтăрмахне, Кавказри трагедиллĕ пулăмсене пула çĕршывăн экономики, социаллă тытăмĕ çав тери юхăнса çитнĕччĕ. Çав вăхăтри обществăн моральлĕ шайĕ пирки те çавнах каламалла. Çĕршыв территорийĕн пĕрлĕхлĕхĕ те саланса каясси патнех çитнĕччĕ. Çавăн пек условисенче пире пĕрлештерекен политика партийĕ питех те кирлĕ пулнă. «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти пĕтĕм Раççей обществине çыхса тăракан, ăна политика çирĕплĕхĕпе тата пирĕн социаллă пурнăçпа экономика программипе тивĕçтерекен вăй пулса тăчĕ.

Съездра «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти ертӳçи Борис Грызлов доклад туса панă. Вăл Владимир Путина хăйсене шаннăшăн тата пулăшнăшăн тав тунă, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» умне çĕршыв ертӳçи лартнă пур задачăсене те пурнăçа кĕртме пулни çинчен шантарса пĕлтернĕ. «Пирĕн парти çапла шутлать, – тенĕ Б. Грызлов, – малаллахи аталанун никĕсĕ – вăл тытса пыракан çулйĕрĕн çыхăнулăхĕ. Çав çул-йĕр вăл – сирĕн çулйĕр, Владимир Владимирович, эпир суйлава çав çул-йĕрпе каятпăр!»

«Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн» VIII съезчĕн делегачĕсем партин суйлав умĕнхи «Путин планĕсем – аслă çĕршывăн шанчăклă пуласлăхĕ» программине çирĕплетнĕ.

**VIII съезд Раççей Федерацийĕн Федераци Пухăвĕн пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Думине Пĕтĕм Раççейри «Пĕрлĕхлĕ Раççей» политика партийĕнчен депутата суйлама тăратнă кандидатсен федераци списокне çирĕплетнĕ. Çав списокра пĕтĕмпе 600 кандидат (83 регион ушкăнĕ).**

**Федераци списокĕнчи пĕрремĕш номер – Владимир Путин. Чăваш Ен списокне Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров ертсе пырать. Чăваш регионĕн ушкăнĕнче Патшалăх Думине «Пĕрлĕхлĕ Раççейрен» суйланнă Константин Косачевпа Павел Семенов депутатсем, Патăръел районĕнчи депутатсен Пухăвĕн ертӳçи, «Малалла» ял хуçалăх артелĕпе «Первомайски» ЯХПК ертӳçи Михаил Петров, Раççей Геройĕсем – Николай Бударин космонавтлетчик тата Евгений Борисов, Президентăн перинаталь центрĕн тĕп врачĕ Алла Самойлова.**

# НАГРАДА ИЛНĔ ЯТПА!

Вĕренекен çамрăксене пĕлӳ парас ĕçре çитĕнӳсем тунăшăн пирĕн районти çак педагогсене **Раççей Федерацийĕн вĕрентӳ тата наука министерствин Хисеп грамотисемпе** наградăланă:

**Любовь Ивановна ВАСИЛЬЕВАНА** – Буинскри вăтам шкул директорне;

**Галина Николаевна НИКИТИНАНА** – Эйпеçри вăтам шкулти вырăс чĕлхипе литература учительне;

**Алефтина Александровна ИГНАТЬЕВАНА** – Йĕпреç район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн методика кабинечĕн заведующине;

**Татьяна Макаровна МАТРОСОВАНА** – Йĕпреçри шкул-интернат воспитательне.

x x x

Çак педагогсем **Чăваш Республикин Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерствин Хисеп грамотисене** тивĕçнĕ:

**Юрий Анатольевич СЕМЕНОВ** – Липовкăри вăтам шкулти технологи учителĕ;

**Елена Аркадьевна ВАСИЛЬЕВА** – Йĕпреçри 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулти истори вĕрентекенĕ;

**Елизавета Андреевна СИЛЮКОВА** – Йĕпреçри 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулти математика учителĕ;

**Энвер Рахимзянович ХУСНЕТДИНОВ** – Чăваш Тимешри вăтам шкулти физикăпа информатика учителĕ;

**Алевтина Владимировна ТИМОФЕЕВА** – Березовкăри тĕп шкулти кĕçĕн классен учителĕ;

**Надежда Рэмовна ОСИПОВА** – Йĕпреçри «Пилешĕм» ача сачĕн воспитателĕ.

# ВАТТИСЕН КУНĔ

**Юпа уйăхĕн пĕрремĕшĕнче тивĕçлĕ канăва тухнă ветерансем валли «Сунарçă çурчĕ» кану керменĕнче Ватă çынсен кунĕ ячĕпе чăнчăн уяв пулчĕ. Кунта пуçтарăннисене малтанах район тата Йĕпреç хула тăрăхĕн представителĕсем уяв ячĕпе ăшшăн саламларĕç, унтан концерт пулчĕ. Йĕпреçри культура çурчĕ çумĕнчи ветерансен халăх хорĕ чи ăнăçлă номерĕсене куракансен умне кăларчĕ.**

«Кĕрхи калейдоскоп» ятпа Йĕпреç хула тăрăхĕн тĕп библиотеки хатĕрленĕ чечек çыххисен выставки кашнин кăмăлне çĕклерĕ, чечексем уяв сĕмне татах та илемлетрĕç.

Уява хутшăннă пенсионерсем хăйсене çапла савăнăç парнеленĕшĕн «Татьяна» массажпа сиплекен салон ĕçченĕсене, «Ĕмĕт» туй салонĕн ертӳçине, «Росинка» суту-илӳ çурчĕн, «Рубль-Бум» магазин заведующийĕсене, районти «Гранит» инвалидсен обществăлла организацине, Амур Шарипов предпринимателе чĕререн тав тăваççĕ.

***Л. ЭШ.***

# БИБЛИОТЕКА ХĂНАСЕНЕ ПУÇТАРЧĔ

Хумпуç Патăръел ял библиотекинче кану каçĕ иртрĕ. Ваттисен кунне халалларĕç ăна. Ялти шкулта вĕренекенсен аслашшĕпе асламăшĕсем, кукашшĕпе кукамăшĕсем, ашшĕ-амăшĕсем пуçтаранчĕç библиотекăна. Кану каçне библиотиека пуçлăхĕ Тамара Карпова, 4-мĕш класра вĕренекен Даша Демидова, Лена Карпова тата Максим Карпов ăста йĕркелесе пычĕç. Кану каçĕнче ваттисен ячĕпе ырă сăмахсем, сăвăсем янăрарĕç. Ватăсем хăйсем те парăмра тăрса юлмарĕç. Пурнăçра пулса иртнĕ кăсăк самантсемпе паллаштарчĕç, юрласа савăнтарчĕç. «Кукамăшĕпе мăнукĕ» кулăшла сценка пурин кăмăлне те тивĕçтерчĕ. Даша Демидова, Лена Карпова тата Тамара Карпова хăйсен ролĕсене ăста калăпларĕç. Кану каçĕн вĕçĕнче мăнукĕсем хăйсен аслашшĕ-асламăшĕсене, кукашшĕ-кукамăшсене асăнмалăх чечек çыххисем парнелерĕç. Библиотека пуçлăхĕ Тамара Карпова ватăсене вĕри чейпе сăйларĕ.

***Т. КАРПОВА, библиотекарь.***

# ПЕРЕДОВЫЕ КОМБАЙНЕРЫ НА УБОРКЕ УРОЖАЯ (в тоннах, на 3 октября 2007 года)

| Ф. И. О. комбайнера | Хозяйства | Марка комбайна |
|---|---|---|
| Шибаев Ф. М. | «Кр. партизан» | Дон-1500 |
| Васильев В. Н. | «Кр. партизан» | Дон-1500 |
| Шаршевич В. Ф. | ОАО «Рассвет» | Дон-1500 |
| Белов В. Р. | «Кр. фронтовик» | Енисей |
| Никитин А. Н. | «Патман» | Енисей |
| Гордеев В. И. | им. Ильича | Дон-1500 |
| Чандров И. И. | им. Калинина | Енисей |
| Ванифатьев В. А. | «Трудовик» | Енисей |
| Григорьев В. Н. | ОАО «Рассвет» | Дон-1500 |
| Сюдамов С. А. | им. Ильича | СК-5 Нива |

# ПЕРЕДОВЫЕ МЕХАНИЗВТОРЫ НА ПОДЪЕМЕ ПОЧВЫ ПОД ОЗИМЫЕ (в га, на 3 октября 2007 года)

| Ф. И. О. механизатора | Хозяйства | Марка трактора |
|---|---|---|
| Арсентьев В. Т. | «Трудовик» | ХТЗ-17221 |
| Ивашкин В. С. | им. Ильича | ДТ-75 |
| Иванов А. И. | «Кр. партизан» | Т-150 |
| Егоров П. А. | им. Калинина | ВТ-150 |
| Никифоров А. В. | «Патман» | МТЗ-82 |
| Васильев В. Н. | «Кр. партизан» | МТЗ-1221 |
| Антонов Н. А. | им. Кирова | ДТ-75 |
| Степанов Н. В. | «Кр. партизан» | МТЗ-1221 |
| Гаврилов А. Н. | ОАО «Рассвет» | Т-150 |
| Константинов А. В. | им. Калинина | МТЗ-82 |
| Петров Н. В. | ЗАО АФ «Ибресинская» | МТЗ-892 |
| Степанов В. М. | ЗАО АФ «Ибресинская» | МТЗ-892 |
| Иванов В. В. | «Патман» | Т-150 |
| Руссков В. М. | ОАО «Рассвет» | Т-150 |
| Кузьмин В. | ЗАО АФ «Ибресинская» | ВТ-150 |
| Гордеев С. Н. | ЗАО АФ «Ибресинская» | МТЗ-892 |
| Васильев М. К. | ОАО «Рассвет» | Т-150 |
| Иванов С. Н. | ОАО «Рассвет» | ДТ-75 |

# ЕНТЕШЕ КӲНĔ САВĂНĂÇ

Пĕчĕк Çиçĕмкасси çыннисем кăçал хăйсен поселокне тунăранпа 85 çул çитнине паллă турĕç. Çак кунсенче вĕсем каллех вырăнти клуба пуçтарăнчĕç. Ваттисен кунĕ ячĕпе йĕркеленĕ мероприяти ветерансемпе çамрăксен асĕнче чылайлăха упранĕ. Уява килнисем пурте çак тĕлпулăва йĕркеленĕ, асăннă поселокра çуралса ӳснĕ, хальхи вăхăтра «Водстроймонтаж» ООО директорĕнче ĕçлекен Э. А. Марушева чунтан-вартан тав турĕç. Эдуард Авенирович ентешĕсем патне хаклă парнесем илсе килнĕ. Вăл поселок клубне тĕслĕ телевизор парнелерĕ. Кашни пенсионер унăн аллинчен Николай Жирновăн «Ибресинский край», Геннадий Максимовăн «Сталин грамоти», Нина Ерилееван «Упакасси – тăван анне сăпки» кĕнекисене илчĕç.

Уявра ĕçпе вăрçă ветеранĕсен ячĕпе ăшă сăмах сахал мар пулчĕ. Çиçĕмкассисене Пысăк Упакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. М. Антонова (праçник вăл çуралнă кунпа тĕл килчĕ), поселок ветеранĕ Ю. М. Рыбаков, журналистикăра нумай ĕçленĕ С. Е. Ефимов (вăл поселок историйĕпе унăн çыннисем çинчен тĕплĕн каласа пачĕ) т. ыт. те саламларĕç.

Пĕчĕк Упакассинчи культура çурчĕн пултарулăх ушкăнĕн членĕсем поселок çыннисене ятарлă программăллă концертпа савăнтарчĕç.

***Г. ВАСИЛЬЕВ.***

# ПОЗДРАВЛЯЕМ

Коллектив детского сада «Рябинка» горячо и сердечно поздравляет воспитательницу детского дошкольного образовательного учреждения **ВАСИЛЬЕВУ Любовь Анатольевну** с 50-летием. Желает здоровья, счастья и благополучия.

Поскольку годы не считаем,
На вид вы очень хороши.
Вас с юбилеем поздравляем,
Желаем счастья от души!
Желаем Вам, чтоб жизнь кипела,
Чтоб так и не пришла усталости пора.
Чтоб спорилось в руках любое дело,
И завтра было лучше, чем вчера.

# САЛАМЛАТПĂР

Районти тĕп больницăра медицина сестринче ĕçлекен **Людмила Николаевна ВОЛКОВАНА** (Йĕпреç пос.) çитес тунтикун паллă тăвакан чаплă юбилейпа чун-чĕререн ăшшăн та тараватлăн саламлатпăр, вăрăм кунçул, çутă телей, таса ăраскал, çынсен сывлăхне упрас ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума ырлăх-ăнăçу сунатпăр.

Çур ĕмĕр вăл – каяс çул-йĕр çурри,
Çулу сан вăрăмлантăр та ан чактăр.
Мĕнле телей – эс тĕнчере пурри.
Санпа пĕрлех эпир те савăнатпăр.

***Кăшмас Туçа ялĕнче пурăнакан тус-кумăшĕсем: АНДРЕЕВСЕН çемйи, вĕсен хресна ывăлĕ ЭДИК.***

# ХĂРУШСĂРЛĂХШĂН, ЛĂПКĂЛĂХПА ÇИРĔПЛĔХШĔН

**Юпа уйăхĕн 4-мĕшĕ Раççей Федерацийĕн гражданла оборонин официаллă кунĕ шутланать. Шăп çав кун, 75 çул каялла, пирĕн çĕршывра гражданла оборонăна туса хунă...**

Хальхи вăхăтра пирĕн районта çав тытăм çинче никĕсленĕ гражданла оборона тата уйрăмах хăрушă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пай пур. Ăна саппасри подполковник Петр Данилович Петров ертсе пырать. Хăйĕнчен те, хăйне пăхăнакансенчен те çирĕп ыйтакан çын вăл. Çав пайра дежурнăй-диспетчер службиı (тел.:2-10-58) пур, вăл инкек-синкек пулса иртни çинчен пĕлтернисене йышăнать, çав хыпарсене тĕпчесе тишкерет, кун пирки ытти службăсене те хыпарлать. Оперативлă дежурнăйсен тивĕçне пурнăçласа пыракан М. Н. Александрова, А. В. Гаврилова, Р. И. Иванова тата Л. Т. Федотова хăйсен професси ăсталăхне ӳстерес тĕлĕшпе çине тăрсах тимлеççĕ. Ара, вĕсен вăр-варлăхĕпе, тĕрĕс ĕçĕпе тепĕр чухне çын пурнăçне çăлса хăварасси те тачă çыхăннă.

2006 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнче РФ «Раççей Федерацийĕнчи вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен» Саккунĕ вăя кĕчĕ. Унăн 14-18 статйисенче çакна палăртнă: халăха тата тавралăха инкеклĕ лару-тăруран хӳтĕлесси, пушар тата шыв объекчĕсем çинче хăрушсăрлăх ыйтăвĕсене татса парасси вырăнти пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать. Ял тăрăхĕсемпе хула тăрăхĕн пуçлăхĕсем шăпах гражданла оборона штабĕсен ертӳçисен тивĕçне пурнăçлаççĕ те.

Хальхи тапхăрта уйрăмах хăрушă пулăмсемпе çыхăннă тĕслĕхсем (аварисем, çутçанталăкра пулса иртекен пулăмсем, техногенлă катастрофăсем т. ыт. те) йышлансах пыни палăраççĕ. Пирĕн çĕршывра çавăн пек лару-тăрăва сирсе яма хутшăннă чухне çынсем вилесси 3-4 процент, пурлăх сиенленесси 7-10 процент ӳсни паллă.

Пирĕн тăрăхра анлă сарăлнă хăрушă инкексенчен пĕри вăл – пушар. Вут-çулăмăн çулне пӳлсе лартас тĕлĕшпе Патшалăх пушар асăрхавĕн районти уйрăмĕн сотрудникĕсемпе 28-мĕш номерлĕ пушар чаçĕнче ĕçлекенсем кирек хăçан та сыхă та тимлĕ. Пушар чаçĕн пуçлăхĕ П. Г. Павловпа Пушар асăрхавĕн районти пайĕн ертӳçи Н. С. Прокопьев тата вĕсене пăхăнса тăракансем хăйсен тимлĕхĕпе тăрăшулăхĕнчен пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерсе тăрасси нумай килнине лайăх ăнланаççĕ. Пушара хирĕç кĕрешекен служба подразделенийĕнче 4 единица (4 автоцистерна) техника пур. Çав автомашинăсен усă курмалли вăхăчĕ тахçанах тухнă ĕнтĕ, анчах сотрудниксем тăрăшнипе вĕсем кирек хăçан та çула кайма шанчăклă.

28-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн техники тата сотрудникĕсем кирлĕ условисемпе тивĕçтернĕ пушар деповĕнче вырнаçнă.

Ведомствăллă пушар хуралĕн подразделенийĕсенче 9 единица техника шутланать. Çав техникăна юсавлă тытасси, ăна çунтармалли-сĕрмелли япаласемпе тивĕçтересси, вут-çулăма хирĕç тăракансене тытса тăрасси, вĕсене талăкĕпех хурал тăратасси – тĕп ыйтусем, вĕсене ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисемпе ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем пĕрлехи вăйпа татса параççĕ. Ытти предприятисемпе организацисемшĕн вара ведомствăллă пушар хуралне тытса тăрасси йывăрлансах пырать, çавна май вĕсене муниципалитетăн пушар хуралĕ пулăшу аллине тăсса парать. Муниципалитетăн пушар хуралĕн ĕçне Буинскпа Березовка тăрăхĕсенче йĕркелесе янă. Нумаях пулмасть Кĕлĕмкасси ял тăрăхĕнче те пушар машини туяннă. Муниципалитетпа ведомствăллă пушар хуралĕн ĕçне тĕрĕслесе тăнипе пĕрлех вĕсене методика пулăшăвĕ парассине те тĕпе хурать 28-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн пуçлăхĕ Петр Григорьевич Павлов.

Пушарниксен ĕçĕ вăл – хăйсен пурнăçĕсене шеллемесĕр кĕрешекенсен ĕçĕ, вăл кирек хăçан та хăрушлăхпа çыхăннă. Ирсерен дежурствăна кĕнĕ чухне хăйсене мĕнле шăпа кĕтсе тăнине пĕлмеççĕ вĕсем. Инкек пулни çинчен хыпар илнĕ-илменех, вĕсем вырăна çав самантрăх тухса кайма хатĕр. Професси ăсталăхĕ пысăк пулни, хăраманлăх, юлташла пулăшу, пĕр-пĕрне алă тăсса пани, ют çын хуйхине чĕре варрине илни – акă мĕнле пахалăх паллисем илем кӳреççĕ пушар хуралĕн сотрудникĕсене.

Инкеке сирсе ярас тесен, хăрушлăх сăлтавĕсем çинчен лайăх пĕлмелле, вĕсене хирĕç тăма хатĕр пулмалла. Акă мĕншĕн инкексенчен хӳтĕленмелли меслетсене пĕчĕклех алла илме хăнăхса пымалла. Шăпах çакна вĕрентеççĕ те шкулсенче «ОБЖ» курсĕн преподавателĕсем. Çак тивĕçе шанса панă В. В. Филиппов (Эйпеç), Э. Г. Павлов (Хурамал), Н. Г. Федотов (Ирçе Çармăс) вĕрентекенсем хăйсен ĕçне тӳрĕ кăмăлпа туса пынине палăртса хăварни питех те вырăнлă.

Районти шкулсенчи педагогика коллективĕсем ӳсекен çамрăк ăрăва кăткăс та çивĕч лару-тăрура хăйсене, тус-юлташĕсене, ытти çынсене пулăшма, ĕçре яваплăха туйма, хăрушлăха сирсе ямашкăн хатĕр тăма воспитани парассишĕн тăтăшах тимлеççĕ.

Шкул çулне çитменнисен районти учрежденийĕсенче ĕçлекенсемпе вĕсене çӳрекенсем те айккинче тăрса юлмаççĕ. Ача сачĕсенче пĕчĕккисене хăрушсăрлăх йĕркисене пăхăнма вĕрентесси çине пысăк тимлĕхпе çаврăнса пăхаççĕ: калаçусем, вăййсем, викторинăсем, смотр-конкурссем ирттереççĕ, инсценировкăсем лартса параççĕ.

Туса ирттерекен çакăн пек ĕççем ачасен пурнăçĕсене сыхласа хăварма пулăшмаллах. Пĕтĕмлетерех каласан, районти нумай сыпăкран тата нумай тытăмран тăракан гражданла оборона çынсен хăрушсăрлăхĕшĕн, лăпкăлăхпа çирĕплĕхшĕн ĕçлет. Эпир хамăр ĕçе ăнăçлă туса пынă теме хăçан пултаратпăр? Хăçан та хăçан пирĕн ĕç-хĕл çынна çăлса хăварма май туса пачĕ пулсан...

Професси уявне паллă тунă май, районти гражданла оборона тытăмĕнче ĕçлекенсене тата ветерансене Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн пархатарлăн тăрăшма, пысăк çитĕнӳсем тума ăнăçусем сунатпăр.

***М. АНДРЕЕВА,***
***район администрацийĕн гражданла оборона тата уйрăмах хăрушă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пайăн тĕп специалисчĕ.***



# РОСГОССТРАХ – лидер на страховом рынке России

**На состоявшейся 22 мая 2007г. торжественной церемонии вручения российской общественной премии в области страхования «Золотая Саламандра» Группа компаний «Росгосстрах» стала победителем в шести номинациях.**

**Росгосстрах – ведущая страховая компания. Самая крупная среди страховых компаний России по сборам, количеству работающих, масштабу филиальной сети, сравнимой по географическому охвату со Сбербанком и Почтой России.**

**В первом полугодии 2007 года Группа компаний «Росгосстрах» собрала 26,1 млрд. рублей страховых премий, что на 23% превышает показатель аналогичного периода 2006 года. Страховые выплаты увеличились на 31% до 11 млрд. рублей.**

**В целом Росгосстрах продолжает вести активную работу на рынке добровольного страхования автотранспорта физических и юридических лиц. По этому виду страхования собрано более 6,6 млрд. рублей страховых премий, что почти на 60% больше, чем в первом полугодии 2006 года.**

**Росгосстрах продолжает стабильно работать на рынке страхования недвижимости и домашнего имущества граждан. Сборы здесь составили 3,1 млрд. рублей. В этом сегменте наиболее активно развивается страхование строений – 2,6 млрд. рублей, что на 37% выше, чем за аналогичный период прошлого года.**

**В поселке ИБРЕСИ Росгосстрах представлен страховым отделом Чувашского филиала, в котором трудятся 36 страховых агентов и 6 штатных работников. О работе компании, ее планах мы беседуем с начальником страхового отдела Р.И. Ильиной.**

**— Роза Ивановна, расскажите, как долго ваша компания работает на рынке страхования.**

— В этом году 6 октября «РОСГОССТРАХ» отметит 86-летие успешной работы. Сегодня он имеет лицензии, дающие право на осуществление более 130 видов страхования. Среди них страхование автотранспорта (автокаско), автогражданской ответственности, страхование имущества, профессиональной ответственности оценщиков, аудиторов, опасных производственных объектов, строительно-монтажных рисков, добровольное медицинское страхование и многое другое.

**— В каких регионах «РОСГОССТРАХ» предлагает свои услуги и с кем вы сотрудничаете в поселке Ибреси?**

—Группа компаний «Росгосстрах» представляет собой вертикально интегрированный холдинг. Он состоит из ОАО «Росгосстрах», 3 региональных, 7 межрегиональных страховых компаний, ООО СК «РГС-Жизнь»,основными видами деятельности которой являются страхование жизни, добровольное пенсионное страхование, страхование от несчастных случаев и болезней, а также ООО «РГС-Медицина», осуществляющей операции по обязательному медицинскому страхованию. В компании Группы входит порядка 3000 агентств, страховых отделов и центров урегулирования убытков, которые представлены по всей России. Общая численность работников системы Росгосстраха превышает 97 тыс. человек, в том числе более 60 тыс. агентов. В Ибресях и в районе мы сотрудничаем со всеми предприятиями и организациями, предпринимателями и предприятиями малого и среднего бизнеса.

**— Роза Ивановна, перед очередным Днем страховщика, как вы оцениваете итоги деятельности страхового отдела в Ибресях?**

Сегодня Росгосстрах в Чувашии и у нас в районе динамично развивается, имеет диверсифицированный и хорошо сбалансированный портфель. Росгосстрах сохранил позиции лидера страхового рынка и формирует его стандарты. Объемы поступлений страховых премий Росгосстраха в республике неуклонно растут. Общая сумма страховых премий нашего страхового отдела за 9 месяцев т.г. составила около 6,5 миллиона рублей., что более чем в 1,2 раза превышает аналогичный показатель прошлого года. Страховые выплаты составили 4,1 миллиона рублей, а это в 1,3 раза больше аналогичного показателя 2006 года.

**— Четыре года назад в стране вступил в силу Закон об обязательном страховании автогражданской ответственности. А у вас страхование автотранспорта и автогражданской ответственности является одним из приоритетных...**

— Многолетний опыт автострахования и разветвленная филиальная сеть позволили Росгосстраху одной из первых получить лицензию на обязательное страхование автогражданской ответственности. У нас работают люди, которые понимают важность сервиса и удобства для клиентов при выплатах страхового возмещения. В настоящее время страховой отдел в п. Ибреси обслуживает более 3 тыс. договоров ОСАГО, мы ежемесячно сопровождаем около 42 страховых событий по этому виду страхования. Учитывая постоянное расширение клиентской базы, объем обслуживания договоров по ОСАГО будет возрастать. Однако это никак не повлияет на качество предоставляемых услуг.

**— Известно, что не все страховые компании справились с массовыми выплатами по автогражданке, некоторые даже лишились лицензий.**

— Вы правы, не все страховщики смогли выполнить взятые на себя обязательства. Федеральная служба страхового надзора приостановила, а потом и отозвала лицензии у нескольких компаний, занимающихся ОСАГО. Им было запрещено заниматься страховой деятельностью из-за потери финансовой устойчивости, отказов и задержек в выплатах клиентам.

**— Что вы посоветовали бы автовладельцам, которые застраховались в проблемных, как оказалось, компаниях?**

—Со своей стороны, всем автовладельцам могу посоветовать внимательнее относиться к выбору страховой компании, учитывать основные финансовые показатели, рейтинги независимых экспертных организаций. А за информационной и организационной поддержкой для решения вопросов, связанных с заключением договоров страхования и при наступлении страховых событий потерпевшим и страхователям можно обращаться в страховой отдел Росгосстраха в п. Ибреси по адресу ул. Леспромхозная, д.1 , тел. 2-12-38 или 2-16-56. Так что приглашаю вас к сотрудничеству с надежной компанией, которая всегда рядом с вашим домом и по-настоящему заслуживает доверия.

**Беседовал К. Д. АЛИМАСОВ.**
**Фото А. ФИЛИППОВА.**

**По результатам исследования «Марка доверия – 2007», которое проводил журнал «Ридерз дайджест», компания «Росгосстрах» признана победителем в номинации «Страховая компания». Росгосстрах, как компания, заслуживающая наибольшее доверие, получил подавляющее количество голосов. Среди лауреатов этой премии такие крупнейшие мировые и российские бренды: Nokia, Toyota, BOSCH, Avon, Johnson&Johnson, Visa, Сбербанк РФ, Комстар-Директ и многие другие**

**Росгосстрах вошел в «Рейтинг деловой репутации российских компаний», составленный Всероссийским центром изучения общественного мнения (ВЦИОМ).**

**В номинацию «Банки и финансовые компании», помимо Росгосстраха, вошли Внешторгбанк, Сбербанк, Альфа-банк, Росбанк, Райффайзенбанк. Среди участников рейтинга – Ростелеком, АВПК «Сухой», МТС, Вымпелком, Аэрофлот, Газпром, Лукойл, Северсталь и другие крупнейшие компании российского рынка.**



**Виталий Григорьевич Родионов – Чăваш Енре кăна мар, Раççей шайĕнче палăрнă ăсчах. Унăн пултарулăхĕ чăннипех тĕрлĕ профиллĕ: вăл паллă литературовед-критик та, сумлă фольклорист та, тĕллевлĕ тĕпчевçĕ те, пархатарлă методист-вĕрентекен те, çирĕп ыйтакан ертӳçĕ-декан та. Ăслăлăх картлашкийĕ те çав тери курăмлă унăн: филологи наукисен докторĕ, профессор, Чăваш Республикин наукăн тава тивĕçлĕ деятелĕ, Чăваш Республикин ăслăлăхпа ӳнер наци академийĕн член-корреспонденчĕ, И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ çумĕнчи доктор диссертацине хӳтĕлемелли канашăн председателĕ. Апла пулин те, çулсерене кĕнеке хыççăн кĕнеке калăплать вăл. Ăна чăваш литературин XVIII-XIX ĕмĕрсенчи аталанăвĕпе тăван халăхăмăрăн сăмах культурин паянхипе ыранхи шăпийĕ, çырусăр сăмахлăхĕпе халăх сăввин хăйне евĕрлĕхĕ, чăваш культурипе çыхăннă ыйтăвĕсем кăсăклантараççĕ. Вăл – 30 яхăн монографипе уйрăм кĕнеке тата 300 ытла ăслăлăхпа методика статйисен авторĕ.**

# ФОЛЬКЛОР ТĔПЧЕВÇИ – 60 ÇУЛТА

В. Г. Родионов ячĕ – фольклор ăслăлăхĕнче уйрăмах паллă. Вăл пичетленĕ тĕпчевсенчен нумайăшĕ чăвашсен сăмах вĕççĕн çӳрекен тĕрлĕ хайлавĕсемпе фольклористикăра татса паман ыйтусене тишкернипе çыхăннă. Сăмахран, чăваш фольклорĕн историне анлă тапхăрта палăртса, ученăй сăмахлăх жанрĕсене уйрăммăн тĕпчерĕ, вăл шутра анлă статьясем («К образу лебедя в чувашском фольклоре», «Вопросы жанровой классификации чувашского фольклора», 1982; «Фольклор у чувашей», 1988; «Чĕлхе, кĕлĕ тата пил сăмахĕсем», 1989; «Вĕрӳ-суру чĕлхи», 2001), чăваш халăхĕн сăвă-юррин кун-çулĕпе уйрăмлăхĕсене тишкернĕ монографисемпе вĕренӳ пособийĕсем («Чувашская народная поэзия», 1980; «Чувашское и тюркское стихосложение: Учебное пособие», 1986; «Чувашский стих: Проблемы становления и развития, 1992), авалхи тĕрĕк тата чăваш сăмахлăхĕн пуххисене («Революцичченхи чăваш литератури: Тексsucceeded сем. 1 том (XX ĕмĕрччен)», 1984; «Чăваш литератури: Хрестомати: Вăтам шкулăн 10-мĕш класĕ валли», 2002; «Чăваш литератури: Вĕренӳ кĕнеки: Вăтам шкулăн 10-мĕш класĕ валли», 2003 т. ыт. те) пичетлерĕ. Вĕсенче автор халăх поэзийĕн чи авалхи тĕсĕсене – кĕллисене, вĕрӳ-суру чĕлхисене, пилĕсене, ылханĕсемпе ӳкĕчĕсене, мăн кĕрӳ такмакĕсене, тупмалли юмахĕсене пăхса тухрĕ. Çакна культурăмăр аталанăвĕпе çыхăнтарчĕ, хамăрăн пуянлăха кӳршĕ халăхсеннипе танлаштарчĕ, пĕр-пĕрне витĕм кӳнине палăртрĕ. Вăл çырнă тăрăх, чăваш фольклорĕ халăх йăли-йĕркипе тачă çыхăнура тăрать; халăхăмăрăн сăмахлă культури мĕн авалтан килекен пурлăха вырăна хунипе, ăна ăша илнипе, нимрен малтан сăмахăн сăнарлăхĕпе, витĕмлĕхĕпе тата яваплă пĕлтерĕшĕпе шăнăрланнă, тĕрекленнĕ.

Чăвашсен çырусăр сăмахлăх ăслăлăхне – фольклористикăна нумай çĕнĕлĕх кĕртрĕ тĕпчевçĕ. Вĕсенчен пĕри – тĕпчемелли материала е текстсене пĕр тĕвĕлĕхре тата пĕр системăра пăхса тухмаллине çирĕплетсе калани. В. Г. Родионов шухăшĕпе, тĕпчевçĕн çав меслетрен урăх еннелле пăрăнса каймалла мар, хăй суйланă методологине çирĕппĕн тытса пымалла.

Виталий Родионовăн асăннă тата ытти тĕпчевĕсем чăваш ученăйĕсене хамăрăн тăван сăмахлăхăмăрăн историне пăлхар тапхăрĕнчен, VII-VIII ĕмĕрсенченех пуçласа тĕпчемелли çулсем уçса пачĕç. Вăлах сăмахпа чĕлхемĕрĕн сăнарлă пĕлтерĕшне, тĕрлĕ халап-юмах, сăвă-калав, ытти хайлавсен илемлĕхĕ мĕн ĕмĕртен тĕпре пулнине, çыруллă поэзи тăван халăхăмăрăн сăмахлăхĕнчен, унăн шухăш-кăмăлĕнчен тата пурнăçĕнчен чăмăртанса тапса тухнине ĕнентерчĕ. Сăмах май, 1980-мĕшпе 1993 ç.ç. вăл Мускаврa «Чувашское стихосложение и пути его развития» тата «Генезис и эволюция чувашского стиха» темăсемпе кандидатпа доктор диссертацийĕсене ăнăçлă хӳтĕлерĕ. Вĕсенче тĕпчевçĕ чăваш халăх сăввиюррин тытăмĕпе сăнарлăхне, илемлĕх мелĕсене туллин уçса кăтартрĕ, тăван халăхăмăрăн поэзи тĕнчине ытти тĕрĕк халăхĕсен сăмахлăхĕпе танлаштарчĕ, вĕсем пĕр çыхăнура тата пĕр тĕвĕре пулнине палăртса хăварчĕ.

Паянхи кун чăваш фольклористикинче татса паман ыйтусем çителĕклех. Вĕсен шутĕнче: халăх сăмахлăхĕн пулăмĕсене фольклористикăн принципĕсемпе шайлаштарса тишкересси; фольклор терминологине уçăмлатасси; чăваш халăх сăмахлăхне ушкăнсем çине пайласси т. ыт. те. Асăннă проблемăсене В. Г. Родионов «Вопросы жанровой классификации чувашского фольклора», «К вопросу о генезисе чувашского фольклорного стиха», «К проблеме общетюркской исторической поэтики фольклора», «К вопросу о ранних тюркско-финно-угорских фольклорных связях» тата ытти статйисенче татса парать.

«Вопросы жанровой классификации чувашского фольклора» тĕпчевре халăх сăмахлăхĕн проза ретне кĕрекен хайлавĕсене пайлассине автор тĕс тĕлĕшĕнчен (видовое деление) ушкăнлас принципсене тĕпе хурса тĕвĕлеме ыйтать, йăлайĕркепе çыхăннă сăмахлăха вĕсене ирттерекенсемпе çыхăнтарать, ушкăнланă чух мешехсене хутшăннă çынсен çулне кура пайлама сĕнет. Ку меслет этемлĕхĕн ăру-йăх тапхăрĕнчех аталаннă иккен, каярахпа çеç календарлă йăла уявĕсем ăнлавпа хутшăнса, пĕтĕççе кайнă.

Паллă фольклорист халăх сăмахлăхĕн пулăмĕсене яланах нацилĕх, чăвашлăх текен ăнлав витĕр пăхтарать. Ун пек туни халăх хайлавĕсен пĕлтерĕшне пысăкрах та сумлăрах тăвать, мăн асаттесен ĕмĕрхи шухăш-кăмăлне уçăмлăрах палăртать.

Фольклористикăн тĕп тĕллевĕ – халăх хушшинче анлă сарăлнă тĕрлĕ текстсене тĕпчесси. Паян çакă çеç çителĕксĕр. Халăх ăслăлăхне тишкерме тĕллев лартрăмăр пулсан, пирĕн ирĕксĕрех тăван халăхăмăрăн пĕтĕмĕшле пултарулăхĕ çинчен калаçмалла. Кунта сăмахлă текстсемсĕр пуçне, кĕввиçемми те, ташши-юрри те, ӳнерпе сăнарлăх пултарулăхĕ те, ĕç-хĕллĕ тата япалаллă текстсем те кĕреççĕ. Çаксене шута илсен, унсăр пуçне фольклористикăн хăйне уйрăм тĕпчев мелĕсемпе меслечĕсене тĕпе хурсан, халăхăн иксĕлми еткерне пĕтĕмĕшле тĕрĕс хак пама, системăласа ушкăнлама, вĕсен терминологине çирĕплетме пултаратпăр. Ку енчен В. Г. Родионовăн тĕпчевĕсем паянхи чăваш фольклористикинче сумлă та курăмлă, актуаллă та çивĕч.

***Вячеслав ЕНДЕРОВ, филологи наукисен кандидачĕ, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн аслă наука сотрудникĕ.***



**Купăста йăранĕ хушшинче**
**Ачасем ... çырла çисе лараççĕ.**
**Хăйсене ăçта тупни çинчен**
**Пĕр-пĕрне пӳле-пӳлех калаççĕ.**


## ООО «ДОМАШНЯЯ МЕБЕЛЬ»

**СРОЧНО ПРИМЕТ на работу мужчин и женщин для работы в производственных цехах.**

**Заработная плата сдельная + премиальные.**

**Обращаться по адресу: пос. Ибреси, ул. Газопроводная, д. 21.**

**Телефоны: 2-16-73, 2-25-95.**

**744. УТЕРЯННУЮ черную кожаную сумку с документами (паспорт на имя Андреева Виталия Ивановича) просим вернуть за вознаграждение. Тел.: 2-24-12, 2-42-18, 89279960454.**

**745. ПРОПАЛА свинка около 40 кг без особых примет. Знающих о ее местонахождении просим сообщить по адресу: п. Ибреси, ул. Радищева, д. 16.**

**9 октября в Доме культуры п. Буинск с 9 до 18 часов состоится**

## РАСПРОДАЖА

**зимней обуви из натуральной кожи. Все сапоги – по 1200 рублей, ботинки – по 1000 рублей.**


## «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАÇАТ ПАРНИСЕМПЕ ТАВРĂННĂ

Нумаях пулмасть Шупашкарти «Спартак» стадионта республика изданийĕн, «Советская Чувашия» хаçатăн парнисене çĕнсе илессишĕн эстафета чупăвĕсем иртнĕ. Унта пирĕн районтан хутшăннă Туçари тĕп шкул команди аван çитĕнӳсем тунипе палăрнă.

Александр Маргинов, Алексей Леонтьев, Артем Ердеменов, Кристина Михайлова, Машăпа Александра Петровасем (тренерĕ Вячеслав Александрович Петров) 400 метрлă дистанцие эстафетăпа чупса 6 минут та 40 çеккунтра парăнтарнă, Çĕнĕ Шупашкар тата Патăръел командисене темиçе çеккунт кăна выляса ярса виççĕмĕш вырăна тухнă.

Виççĕмĕш вырăн та чапсăр мар, çамрăк атлетсене хаçат редакцийĕ Хисеп грамотисемпе, медальсемпе тата парнепе чыс тунă. Маттур, ачасем! Спортра ӳлĕмрен те çитĕнӳсем тума ырлăх-сывлăх пултăр сирĕн.

***С. ИВАНОВА.***

## ПОЗДРАВЛЯЕМ

От всей души поздравляем нашу многоуважаемую коллегу, старшую медсестру реанимационного отделения Ибресинской райбольницы **ВОЛКОВУ Людмилу Николаевну** с юбилеем – 50-летием. Желаем крепкого здоровья, неиссякаемой энергии, бодрости духа, благополучия во всем и отличных успехов в работе.

Вы заслужили в жизни радость
На много дней уже вперед.
Так будьте счастливы, здоровы,
И каждый день, и каждый год.

***С уважением КОЛЛЕГИ.***

## САЛАМЛАТПĂР

Çут тĕнчери чи çывăх та чи хаклă çыннăмăра – юратнă хĕрĕме, мăшăрăма, аннене – Энтриелĕнче пурăнакан **Галина Аркадьевна ДАНИЛОВАНА** – чĕре çумне ăшшăн ыталаса юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнче çур ĕмĕр тултарнă ятпа саламлатпăр. Тавах сана, анне, çуратнăшăн, çын тунăшăн, паян кун та пире пулăшса тата чун-чĕре ăшшине парса тăнăшăн. Тĕнчере эс пурришĕн Турра тав тăватпăр. Ан ватăл, анне, нихăçан та ан чирле, вăрăм ĕмĕр ĕмĕрле, эс пирĕншĕн хĕвел те, уйăх та, пире ăшă санăн çумăнта.

***АШШĔ, МĂШĂРĔ, 3 ЫВĂЛĔ ТАТА КИНĔ.***

## ТАВ ТĂВАТПĂР

Пире йывăр çухатăва тӳссе ирттерме, пирĕн юратнă мăшăра, аттене, кукаçи-асаттене - Çĕнĕ Пурнăç поселокĕнче пурăннă **Николай Антонович АРХИПОВА** юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн район администрацине, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, Березовка лесничествин коллективне, тăвансене, ялйыша чун-чĕререн тав тăватпăр.

Çавăн пекех район больницин реанимаци уйрăмĕн коллективне унăн пурнăçне çăлса хăварассишĕн пĕтĕм чунтан тăрăшнăшăн тав сăмахĕ калатпăр.

***МĂШĂРĔ, АЧИСЕМ, МĂНУКĔСЕМ.***


**739. ПРОДАЮ кирпич, стройматер. Т.: 89278507267.** **5-1**

**740. ПРОДАЮ зем. участок с недостроенным домом по ул. Лесная, 19. Цена договорная, документы на руках. Тел.: 2-29-31, 89278511775.**

**742. ПРОДАЕТСЯ корова черно-белой масти. Т.: 89196684089.**


**Отдел образования администрации Ибресинского района выражает глубокое соболезнование заведующей Буинским детским садом «Тополек» Яковлевой Анисии Григорьевне по поводу с безвременной кончиной брата**

**НИКОЛАЯ**

**и выражает искреннее соболезнование родным и близким покойного.**

**Коллектив Ибресинского газового участка филиала «Вурнарымежрайгаз» выражает соболезнование инженеру ПТО Прокопьевой Оксане Николаевне по поводу кончины ее**

**ОТЦА.**

**Çывăх та хаклă ентешĕмĕре, пирĕн çемьепе туслă çыхăну тытнă, пĕр-пĕрин патне кайса çӳренĕ, Пĕчĕк Упакассинче çуралса ӳснĕ, чылай çул Шупашкарта ĕçлесе пурăннă**

**Георгий Николаевич**
**КУДРЯВЦЕВ**

**вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе, тăванĕсемпе, çывăх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн хурланса пĕлтеретпĕр.**

***Пĕчĕк Упакассинчи Ивановсен, Йĕпреçри Ивановсен, Пысăк Упакассинчи Михайловсен çемийисем.***


Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.

*Главный редактор АЛИМАСОВ К. Д.*

Çĕнтерӳшĕн (За победу)

Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР

Адрес РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6

ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, стол заказов — 2-11-97. АДРЕС ГУП "Вурнарский издательский дом": 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.

Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.

Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП "Вурнарский ИД". Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3271 чув. – 2408, русск. – 863. Зак. №

Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком Ⓟ

Срок сдачи в печать — 17.00
Сдан в печать в 10.00

Ответственный за выпуск Филиппов А. А.